**Кĕскен - тăватшар йĕркен**

* * *

Çĕр çаврăнать, утать хĕвел хăй еккипе,
Иртет те кун, каç шăвăнса çитет хуллен.
Çакна эпир сисместпĕр...
Тĕлсĕр «ĕçсемпе»
Куна-çула сутатпăр пит те йӳнĕлле.

* * *

Пӳрт тăрринчен тумла юхать шăпăртатса –
Савнисĕр юлнă çамрăк хĕр куççулĕ пек.
Хĕл ăсанать... Кăштах юласчĕ ярăнса!
Ăçта çуни? Вăл çухалман-ши пусĕпех?

* * *

«Ан кӳрентер çынна усал сăмахпала,
Хăвнах кайран пырса тивет çĕмĕренле...», –
Çапла каланă ваттисем. Эп те калам:
«Çамрăк ăрун ăсчахсене итлемеллех!»

* * *

«Хĕвел çинче те эпĕ тупрăм хура пăнчă!» –
Хăпартланать лапра кăна шыран этем.
Ăна пулах-и, тен, чуна ытла та пăчă,
Илемлĕ кун çути те сӳннĕ пек кичем...

* * *

Сăмахсăрах пĕлетпĕр пурте пит аван:
Хирĕçӳпе-шавпа çĕклеймĕн пурнăçа!
Çапах та чăркăшмасăр кун иртмест паян...
Сăлтавĕ пур: кашнин пулас килет хуçа.

* * *

Кăра ертӳçĕн кăмăлне çемĕçтерес килсен,
Вал сан çине ăшă куçпа
тинкертĕрччĕ тесен
Сăмах пуçариччен кăштах кăна малтан

Ун йыттине ачашласа илме ан ман.

* * *

Ман тусăм пуйрĕ те сасартăк
кайрĕ улшăнса
Курсассăн та курмиш тăва пуçларĕ,
шăпăрлан!
Анчах мĕскер?
Паян ал пачĕ ăшшăн йăл кулса...
Вăл юхăннă иккен...
Каллех эп уншăн халь тăван.

* * *

Хĕвелсĕр пурнăç çук.
Çакна аван пĕлетпĕр пурте.
Ун çутипе тĕнчемĕр ешерет хитрен те сиплĕн.
Çав ырлăха упратпăр-и? Алăсенче-çке – пуртă!
Унпа пĕлместпĕр ĕç тума –
касать вăл урлă-пирлĕ.

* * *

Ĕçри ман «резиденцие» ай юратаççĕ шăнасем!
Уçма та çук чӳречене – вĕлт!
çеç чăмаççĕ пӳлĕме.
Шеф-пуçлăх офисне кĕмеççĕ
илĕртсессĕн те вĕсем, –
Шуйттан патне шăна-и,
пăван та сехĕрленет кĕме!

* * *

Чее тăшман сĕмсĕрлĕхне эс ан шыра таçта,
Вăл çумăнтах ларать сапса наркăмăшне.
Ăна тупас тесен туяс пулать кăна кăштах
Хăвна çемçе çĕртен лĕп-лĕп çуланине.

* * *

Чĕрен те алăк пур. Вăл уçăлса каять те хушăран,
Сисместĕн те –

кĕреççĕ шăвăнса киревсĕр туйăмсем.
Çавсем-и лăпкă пурăнччăр?
Çук, тытăнаççĕ кăштахран
Ыррисене хĕсме... О-о!
Ку «ĕçре» хастар вара вĕсем!

* * *

Тем пулчĕ пурнăçа – ытла та кайрĕ улшăнса!
Пăхатăн та, тĕлĕннипе ӳкетĕн анраса:
Пуш урапа малта пырать хуллен халтăртатса,
Лаши хыçра пырать хисепсĕррĕн пуçне усса...

* * *

Нумай пулмасть стена çинче
илемленетчĕ-ха кавир.
Кивелчĕ те, сарса пăрахрĕç урайне ăна пĕр ир.
Таптаççĕ кавире халь ĕнтĕ пурте
йывăррăн пусса:
«Шăпи ун çаплалла...» – тееççĕ çеç
аллисене сулса.

* * *

Сăнанă-и юратупа çиçен хаваслă çынсене?
Вĕсен сăнĕсенче асамлăн ялтăрать шевле.
Юрать-ха юрату хĕвел пек килнĕ çĕр çине, –
Хăй ăшшипе этемлĕхе вăл парнелет телей.

* * *

Чыса упрас пулать куçа упранă пек ялан –
Ăс панă ваттисем. Вăл пирĕншĕн –
саккун паян.
Кам çухатать чыса – асилтĕрччĕ çакна кăна:
Кайран каю шăтать – илеймĕн укçалла ăна.

* * *

Телейлĕ чух этем пачах аса илмест
инкек çинчен,
Сĕвĕрĕлет ун сисĕм-туйăмĕ пĕр нимĕн юлманла.

Леш пур – ăна самантлăха та вĕçертмест
хăй куçĕнчен,
Кĕтмен çĕртен хыçран пырса çыртать
тăрлавсăр йытăлла.

* * *

Кĕнекесем нумай, ăссем те вĕсенче пайтах.
Çырла пуçтарнă пек пухасшăн эпĕ вĕсене.
Тупатăп çеç пĕрне, татниййĕ çухалать вăштах...
Кивелнĕ-мĕн пуракăм ман –
сисмен вăл шăтнине.

* * *

Пурăнăçра тем тĕрлĕ ăнсăртлăх та
çулăхать çынна.
Вĕсем майĕпенех кăмрăклатаççĕ хӳтлĕхсĕр чуна.
Сирсе пырас тесессĕн ăнăçуллăн çав инкексене
Малтантарах туйса илес пулать
хăв йăнăш тунине.

* * *

Кам тивĕççĕр сукмакпала утать
йĕркеллĕ çул тесех,
Вăл ватлăхри лăпкăлăхне кансĕрлетет хăех.
Кайран çамрăклăхри айванлăхшăн
тивет пăшăрханма,
Анчах чавса пит çывăх та –
май çук ăна çыртма.

*2000*

*Галкин, А. Кĕскен – тăватшар йĕркен // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 309-310.*